## ПОЭТ ЯЧĔПЕ

### I

Кунта уй-хирччĕ, астăватăп,
Тырпул ÿсетчĕ хумханса.
Ак халь асфальт тăрăх утатăп,
Капмар çуртсем çине пăхса.

Квартал çумне квартал вырнаçнă
Çĕн-Кăнтăр микрорайонне;
Лараççĕ керменсем мăнаçлăн
Ялкăштарса кантăксене.

Вулатăп:—«Хусанкай урамĕ»,—
Мĕнле çĕклет ку ман чуна!
Кама мухтав юрри юрлам эп,
Курма пÿрнишĕн çак куна?

Пур ырлăха Çĕршывăм пană:
Пуриншĕн те — мухтав ăна!
Анчах епле-ха эпĕ манăп
Хитре хула тăвакана!

Строительсем! Эсир çĕкленĕ
Çĕршер хваттерлĕ çуртсене!
Унта хулан пиншер ĕçченĕ
Ирттерĕ хăтлă пурнăçне.

Вĕсем сире тав тăвĕç ĕмĕр,
Хăйсем те юлмĕç парăмра.
Ахальтен мар Çĕршыв-аннемĕр
Сынна хаклать ĕçне кура.

Ак эп, çĕн урампа пыруçăн,
Илтеп поэт ятне пĕрмай;

Çынсем, калаçнăн куçа-куçăн,
Вулаççĕ ăшшăн: «Хусанкай!...»

## II

Нумай çĕрте сăваплă вырăн
Упрать ун вилĕмсĕр ятне:
Чăваш çеç мар, халь пурте ыррăн
Таяççĕ пуç ун тăприне.

Ăна сума суса пытарнă
«Ĕмĕр сӳнми вут» çывăхне,
Унтах бюстне лартса хăварнă
Нăк мрамор никĕсĕ çине.

Эп Ленин проспектне тухатăп:
Вăл пурăннă çурт çумĕнче
Кĕç асăну хăми куратăп,
Ун сăнĕ те — куç умĕнче,

Ман асăмрах ун çут Керменĕ,
Ăна, пире савăнтарма,
Мăн Атăл сăртĕнче çĕкленĕ,
Вăл ир те, каç та пуш лармасть.

Унта час-час эпир те халĕ
Хĕрсех вулатпăр сăвăсем,—
Хусанкая курса чĕр халлĕн,
Унран-çке юлнă вĕренсе!

Вăл халăхшăн çунса ирттернĕ
Пуян та кăткăс ĕмĕрне,
Чĕкеç чĕпписем пек вĕçтернĕ
Асран кайми сăввисене.

Вĕсен ытарайми илемĕ,
Хĕвеллĕ ĕмĕт-шухăшсем
Кашнин чун-чĕрине иленнĕ,
Нихçан та манăçмĕç вĕсем.

Мухтавлă сăвăç! Чĕрĕ эсĕ:
Пурнатăн халăх чĕринче.
Тăван чĕлхен шевли сӳнмесĕр
Яту çухалмĕ çĕр çинчен!